# ОКТЯБРЬ ТУЙĂМĔ

*1*

Вăрçапала суту
Тума шутлакана,
Атомпала доллар
Тытса юнакана,
Çав пĕтĕм хуп-хура
Шуйттан-эсрелсене —
Сĕм тамăк хапхинчен
Час кĕртĕ самана.

*2*

Октябрь аслатийĕ
Ак вăтăр çул кĕрлет,
Кремль башнисем çинчен
Таçти çĕршыв таран
Хăватлă ĕç тĕнчин
Çĕнтерĕвĕн палли —
Хĕп-хĕрлĕ çăлтăрăн
Сÿнми çути çиçет.

*3*

Чи аслă тапхăра
Пултартăмăр кĕме,
Кунта ĕмĕрлĕхех
Пĕтерне тĕттĕме,

Чи аслă ирĕкпе
Чăн çынлăх çуркунни
Кунтан пырать, савса
Çĕрти пур этеме.

*4*

Хам Мускавра чухне
Тахçан ĕлĕкрехех
Эп кимĕ çинчи пек
Çӳрерĕм ирĕкре,
Хăват та сип кӳрен
Чĕр йывăç тупнăнах
Куç уçăлчĕ вара,
Вăй хушрĕ ман чĕре.

7. XI. 1947